# 8 000-мĕш номер

Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

39 (8000) № * Шăмат кун, 2012 çулхи çу (май) уйăхĕн 26-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


## Юлашки шăнкăрав янăрарĕ



*Районти шкулсенче ĕнер 11-мĕш классенчен вĕренсе тухакан 252, 9-мĕш классенчен вĕренсе тухакан 375 яшпа хĕршĕн юлашки шăнкăрав янăрарĕ.*

## Паян 8000-мĕш номер пичетленсе тухрĕ

Район хаçачĕ пуçласа 1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнче кун çути курнă. Пĕрремĕш номер «Колхозник сасси» ятпа пичетленнĕ. Хаçат эрнере пĕр хут, 1200 экземплярпа тухса тăнă. Пĕрремĕш редакторĕ Ф.И. Малышкин пулнă.

«Çĕнтерӳ ялавĕ» ятпа район хаçачĕ 1965 çулта тухма пуçланă. Редактор пулса номерсене пичете В.Т. Смирнов алă пуснă. Хальхинче хаçат эрнере виçĕ хутчен вулакан патне çитнĕ. Тиражĕ те малтанхи номерсемпе танлаштарсан тăватă хут пысăкрах пулнă.

Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ. Самани те улшăнчĕ. Район хаçачĕ вара унчченхи пекех районта пурăнакансемшĕн кĕтнĕ хăна пулса тăрать. Кĕтнĕ хăна çеç мар, шанчăклă канашçă та, çывăх юлташ та.

«Çĕнтерӳ ялавĕ» халĕ 4635 экземплярпа саланать. 21 район хаçачĕ хушшинче ку 4-мĕш кăтарту. Пирĕнтен пысăкрах тиражпа паян Çĕмĕрле, Етĕрне тата Патăрьел район хаçачĕсем çеç пичетленеççĕ.

«Çĕнтерӳ ялавĕ» республикăри тĕрлĕ конкурссенче пĕрре мар палăрнă. Пĕтĕм Раççейри конкурсра 4 хутчен çĕнтерӳçĕсен йышне кĕчĕ, «Прессăн ылтăн фончĕ» пахалăх паллине тивĕçрĕ.

Паян 8 пинмĕш номер пичетленнĕрен район хаçатĕнче тĕрлĕ çулсенче редакторта ĕçленисене ятран аса илер: Ф.И. Малышкин, А.Е. Соловьев, П.П. Павлов, П.С. Семенов, И.Г. Мешаков, А.П. Оньков, Г.И. Ульянов, В.Т. Смирнов, А.С. Толмасов, Д.В. Гордеев, В.Д. Шемекеев, А.И. Хованский, Г.А. Андреев, Л.М. Шапошников.

Паянхи коллектива 1993 çултанпа А.И. Тихонов тĕп редактор ертсе пырать. Редакцире нумай çул вăй хуракан В.Л. Шапошников, А.П. Белов пай ертӳçисемпе тата О.Ф. Суворова корректорпа юнашар куллен ăсталăха ӳстерекен Н.Н. Николаева пай ертӳçи, А.А. Белова оператор, Р.А. Макарова корреспондент ĕçлеççĕ. Райхаçат редакцийĕнче малтанхи çулсенче тимленĕ аслă юлташĕсен ырă йăлисене малалла аталантараççĕ.

Пичет ветеранĕсене А.А. Черновăна, А.М. Шарикова, Н.Ф. Скворцова тав сăмахĕ калатпăр.

Эпир юбилейлă номер тухнă ятпа «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата çырăнса илекенсене, ăна килĕрен валеçекен почтальонсене, хаçатпа куллен ĕçлĕ çыхăну тытакансене, ялкорсене, пире ырă сунакан мĕн пур çынна саламлатпăр.

Малашне те пĕрле пулар!

**Райхаçат редакцийĕ.**

Çур аки – 2012

## Акман лаптăксем юлмаççĕ

Районти ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе агрофирмăсем тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсем çу уйăхĕн 25-мĕшĕ тĕлне уй-хир ĕçĕсен планне 99 процент пурнăçланă. Тепĕр майлă каласан, уй-хирсене пурĕ 11554 гектар çуртрисем акса хăварнă. Вăл шутран: çурхи тулă – 3882 гектар (101 процент), урпа – 6734 гектар (104 процент), сĕлĕ – 518 гектар (65 процент).

Çуртрисем акас ĕçе нумай ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче вĕçленĕ.

Асăннă кун тĕлне тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ ял хуçалăх предприятийĕсем пĕр çул ӳсекен курăксене 1282 гектар (86 процент) акнă. «Путь Ильича», «Герой» хуçалăхсенче маларах йышăннă плана 200 процент, Суворов яч. хис. хуçалăх 113 процент, «Свобода» кооператив 105 процент пурнăçланă.

## Çĕр улми пуссисенче

Тырă-пулă акас ĕçе вĕçлесе пынă май хуçалăхсем «иккĕмĕш çăкăр» лартас ĕçе массăллăн кӳлĕнчĕç. Çур аки планĕпе килĕшӳллĕн хуçалăхсем ăна пĕтĕмпе 509 гектар (44 процент) лартнă. Ĕнерхи кун тĕлне çĕр улми лартасси Ильич яч. хис. хуçалăхпа «ДаАн», «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсенче планпа пăхнин çурринчен иртнĕ. «Гея» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра тата В. Бархаткинăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче «иккĕмĕш çăкăр» лартас ĕç вĕçленнĕ (10-шар гектар). Çак ĕç А. Толстовпа В. Горбуновăн тата С. Сретинскийăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче те юлашки гектарсем çине куçнă.

## Çум курăкпе кĕрешесси

Çур аки вĕçленсе пынă май çĕр ĕçченĕ акнă-лартнă культурăсене пăхса ӳстерессине, унти çум курăкĕпе тата сăтăрçăсемпе кĕрешессине малти вырăна кăларать. Иртнĕ эрне кун тĕлне районĕпе тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсен анисем çинчи çумпа кĕрешсе 700 гектар çинче им-çам сапнă. Ку тĕлĕшпе «Герой» пĕрлешӳллĕ хуçалăхпа А. Афанасьевăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче ытларах ĕçленĕ.

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградăланă

***Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн район администрацийĕн 2012 çулхи майăн 12-мĕшĕнчи 433 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Николай Алексеевич ЕРШОВА,** Кашмаш шкулĕн акăлчан чĕлхин учительне;

– **Ирина Григорьевна ИЛЛАРИОНОВĂНА**, Юнкă шкулĕн директорĕн воспитани ĕçĕсен çумне;

– **Роза Валериановна МАЛАКОВĂНА**, Юнкă шкулĕн математика учительне.

***Çынсен сывлăхне сыхлассине тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн çӳлте асăннă йышăнупах çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Тамара Николаевна ШАГЕРОВĂНА**, Нискассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕн медицина сестрине;

– **Галина Гордеевна ЕЛИЗАРОВĂНА**, Мулкачкассинчи фельдшерпа акушер пункчĕн заведующине;

– **Ольга Пименовна ЗАХАРОВĂНА**, районти тĕп больницăн хирурги уйрăмĕн медицинăн аслă сестрине.

***Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн, районти пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна аталантарассине тӳпе хывнăшăн çӳлте асăннă йышăнупах çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Валентина Георгиевна ЕГОРОВĂНА**, А.Н. Вязов уйрăм предпринимателĕн сăрламалли цехри йывăç материалсен шлифовщикне;

– **Николай Евгеньевич ФИЛИППОВА**, А.Н. Вязов уйрăм предпринимателĕн смена пуçлăхне.

Черетсĕр лару

## Улшăнусем вăя кĕреççĕ

Майăн 25-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 18-мĕш ларăвĕ ĕçлерĕ. Унăн ĕçне депутатсемсĕр пуçне район администрацийĕн структура подразделенийĕсен ертӳçисем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе депутачĕсем, çамрăксен парламенчĕн членĕсем, районти предприятисемпе организацисен ертӳçисем хутшăнчĕç.

Ларура депутатсем «Чăваш Республикин Конституцине улшăнусем кĕртесси çинчен» Саккун проекчĕ çинчен; «Чăваш Республикин Пуçлăхне суйласси çинчен» Саккун проекчĕ çинчен; «Чăваш Республикин «Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене суйласси çинчен» Саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» Саккун проекчĕ çинчен; депутатсен Муркаш район Пухăвĕн 2001 çулхи июнĕн 27-мĕшĕнчи С-3/4 № «Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн Хисеп Кĕнеки çинчен калакан положение улшăнусем кĕртесси çинчен» йышăнăвĕн 2-мĕш пунктне улшăнусем кĕртесси çинчен ыйтусем, наградăлама тăратасси çинчен пăхса тухса тивĕçлĕ йышăнусем турĕç.

**Хамăр инф.**

Саламлатпăр



Хаклă çыннăмăра – Çĕнĕ Чемей ялĕнче пурăнакан **Галина Порфирьевна АЛЕКСЕЕВĂНА** – сумлă юбилейпа чун-чĕререн тухакан мĕн пур ăшă та çепĕç сăмахсемпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми телей сунатпăр. Ырă кăмăлушăн, ĕçченлĕхӳшĕн юрататпăр сана.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе ывăлĕсем, кинĕ, мăнукĕ, хунямăшĕ, тăванĕсем.**



Муркашра пурăнакан юратнă аннене, кăмăллă хунямана, ытарайми кукамая тата çывăх тăванăмăра – **Роза Петровна ДАНИЛОВĂНА** – 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Ĕçрен те, çынна пулăшасран та пăрăнманскере, малашне те тулли пурнăç, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу сунатпăр. Пурнăç çулĕ такăр та вăрăм пултăр, чирчĕр санран пăрăнса ирттĕр. 5 хĕр çуратса-ӳстерсе, аслă пĕлӳ парса пурнăç çулĕ çине кăларма сана çăмăл пулман пулинте, эсĕ алă усман. Çакăншăн эпир сана чун-чĕререн тав тăватпăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрĕвĕсем, 8 мăнукĕ, 2 кĕçĕн мăнукĕ, тăванĕсем.**



Пирĕн чун-чĕререн юратнă хаклă аннене, кукамая – Муркаш ялĕнче пурăнакан **Лариса Никифоровна АЛЕКСЕЕВĂНА** 85 çулхи юбилей ячĕпе саламлатпăр. Ĕмĕрӳ вăрăм, сывлăху çирĕп пултăр. Тавтапуç сана эсĕ пурришĕн.

**Пысăк салампа: хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем тата кĕçĕн мăнукĕ.**

Çырăнтару – 2012

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата июль уйăхĕнчен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Иккĕмĕш çур çулта шăмат кунсенчи кăларăм паянхи пек 8 страницăпа тухма пуçлать.**

**Ыран – Пĕтĕм Раççейри библиотекăсен кунĕ**

**ХИСЕПЛĔ БИБЛИОТЕКАРЬСЕМ, ÇАК ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ ТАТА ВУЛАКАНСЕМ!**

Сире çывхарса килекен Пĕтĕм Раççейри библиотекăсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!

Питĕ усăллă ĕç тăватăр эсир. Кĕнеке пĕлтерĕшĕ кашнин пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнать. Хăйĕн тавра курăмне аталантаракан, нумай вулакан çын нимĕнле йывăрлăхра та çухалса каймасть, унтан тухмалли çула тупать. Эсир вара районта пурăнакансене ку енĕпе пысăк пулăшу паратăр, вĕсене кĕнекепе туслашма вĕрентетĕр. Пурнăçăн çак чăнлăхне ачасем мĕн пĕчĕкренăша хывса ÿсчĕр тесе хăвăртан килнине йăлт тăватăр. Шкулта вĕренекенсемпе çеç мар, çитĕннисемпе те тĕрлĕрен мероприяти ирттеретĕр. Тавах сире çакăншăн.

Юлашки çулсенче библиотекăсем халăха кирлĕ тĕрлĕ енлĕ информаци парассипе те нумай ĕç тавăççĕ. Çакна валли вĕсенче условисем те çителĕклĕ, паянхи кун ыйтакан видеосистемăсем, видеомагнитофонсем, компьютерсем пур. Кунта кирек хăçан та Интернета тухма пулать.

Районти библиотекарьсем тăтăшах районта, республикăра иртекен тĕрлĕрен конкурссене хутшăнаççĕ, ку çеç те мар, çĕнтереççĕ те. Çакă тепĕр хут эсир хăвăр ĕçĕре чун-чĕре хушнă пек пурнăçланине, ăна юратнине кăтартса парать.

Малалла та библиотекăсене çÿрекенсем, вулакансем йышлансах пыччăр. Сирĕн вара ĕçлес туртăм ÿссех пытăр. Сире пурне те çирĕп сывлăх, телейлĕ вăрăм кун-çул сунатăп. Ĕçĕр яланах ăнса пытăр, çемьере те йăлтах йĕркеллĕ пултăр.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. ТИМОФЕЕВ.**

# Кунта халăх туртăнать



***Шетмĕпуçĕнчи тĕслĕх библиотека районта кăна мар, республикăра та ырă ятлисен шутĕнче. Библиотека заведующийĕ пулса кунта Валентина Владимировна Никитина вăй хурать. Ĕç стажĕ пĕчĕк мар – 36 çул. Библиотека алăкĕсем кирек кам валли те уçă. Ял çыннисем те, шкулта вĕренекенсем те хаваспах çÿреççĕ унта. Кирлĕ кĕнеке тупса вулама та, çĕнĕ хаçат-журналпа паллашма та, Интернет майĕсемпе усă курма та пулать, тĕрлĕрен мероприятисем те тăтăшах иртеççĕ. Тĕрлĕ конкурссенче çĕнсе илнĕ Хисеп грамотисемпе парнесем вара районтан тытăнса Раççей шайĕнчисем таранах.***

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ÿкерчĕкĕ.**

# Тăрăшуллă библиотекарь

Ял халăхĕн ăс-пурлăхĕ, культура мĕнле шайра пуласси, аталанасси ялти клуб, шкул, библиотека ĕçченĕсем епле тимленинчен те нумай килет. Пирĕн Очăкасси ял библиотекин ертÿçинче Р. Илларионова 1986 çултанпа ĕçлет. Çак хушăра халăхпа пĕрле мĕн тĕрлĕ ĕç-пуç, мероприяти туса ирттермен пулĕ вăл.

Библиотекăра яланах тирпейлĕ, хăтлă. Кĕнеке фончĕ çĕнелсех пырать, электронлă кĕнекесем те хăйсемпе усă куракансене кĕтсех тăраççĕ. Библиотекăра ял пурнăçĕпе çыхăннă тĕрлĕ альбомсем упранаççĕ. Паллă уявсене, кунсене халалланă стендсем çĕнелсех тăраççĕ. Вулав залĕнче 16 тĕрлĕ хаçат-журналпа паллашма пулать. Библиотекăра шкул ачисемпе те, ял халăхĕпе те тăтăшах мероприятисем иртеççĕ. Кĕнекесем вуласа презентацисемпе кинолекторисене пăхса тишкерессисе те йăлана кĕнĕ.

Римма Семеновна çитĕнекен ăрупа уйрăмах тачă çыхăнса ĕçлет. Пуçламăш классенче вĕренекенсене кĕнеке вулама кăна мар, сăвăсем илемлĕ вулама та, сцена çинче пьесăсем лартма та хавхалантарать. Викторинăсем ирттерсе ачасен вĕренес-шырас туйăмне вăйлатать, экскурсисем ирттерсе тăван тавралăха юратма, упрама хистет. Р. Илларионова Очăкассинчи пуçламăш шкул – ача сачĕн пурнăçне те интереслĕ тума хаваспах пулăшать.

Р. Илларионовăн халăхпа ĕçлеме пĕлĕвĕ те, опычĕ те çителĕклĕ. Халĕ вăл краеведени темипе тимлесе ĕçлет. Очăкасси ял историйĕ, Шурча вăрçи, Очăкасси чиркĕвĕн историйĕ, ялти сумлă, паллă çынсем çинчен презентацисем хатĕрлесси – çитес вăхăтра ирттермелли ĕç планĕ. Хастар библиотекарь мĕн палăртнине пĕтĕмпех пурнăçласси, ĕçĕпе вулакансене хавхалантарса ярасси иккĕлентермест те.

**Ф. МАТВЕЕВА, библиотека канашĕн членĕ.**

# Мĕнле мелпе ĕçлесен тĕрĕсрех-ши?

**Вĕрентӳ ыйтăвĕсемпе**

**Муркаш шкулĕн учительницин Валентина Смирнован ĕç стажĕ пĕчĕк мар. 1975 çултанпа ачасене кашни ир кĕтсе илет вăл, ăсатса ярать, вĕсенчен пĕртте уйрăлмасть, кашнине хăйĕн ачисене юратнă пекех юратать. Çак кунсенче район хаçачĕн сотрудникĕ В. Шапошников унпа тĕл пулнă май хальхи вĕрентӳ системи, ачасене тарăн пĕлÿпе тĕрĕс воспитани парас тĕлĕшпе умра тăракан ĕçсем пирки калаçса пама ыйтнă. Сăмах май Валентина Владимировна – ЧР Тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ, Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн Гранчĕсене тивĕçнĕ:**

– 1970-мĕш çулсенче аталанулла вĕрентӳ системисем çинчен калаçма пуçларĕç. Унччен пур çĕрте те шкулсенче традициллĕ мелпе ĕçленĕ. Мана яланах тарăн шухăшлавпа çыхăннă математика предмечĕ кăсăклантаратчĕ. Пĕррремĕш класа килекен кашни ачан – хăйĕн тăнлав шайĕ. Тарăн шухăшлавĕ вăйлă аталаннă ачана традици мелĕпе вĕрентни вырăнлă-ши хальхи тапхăрта?

Традициллĕ вĕрентӳ системине тĕпе хурса М. Моро тата ыттисем çырнă «Математика» кĕнеки вăтам шайра аталаннă ача валли кăна. Тепĕр чухне ун чухлĕ пĕлнипе те çитет тенине те илтме пулать хăш-пĕр вĕрентекенсенчен. Тарăн шухăшласси вăйлă аталаннă ача ку кĕнекесемпе вĕреннĕ май, паллă ĕнтĕ, «5» паллăсем «айне пулать». Ăна вĕренме питĕ çăмăл, ытлашши вăй хумасăрах лайăх паллăсемпе ĕлкĕрсе пыма пултарать.

Анчах вăхăт иртет. Вăл «5» паллăсемпе кăна вĕренет пулсан та, шухăшлав тарăнăшĕ «сывăрма» пуçлать, ансат тĕрĕ шухăшлав кăна тăрса юлать.

Тĕрĕссипе вара тарăн шухăшлавпа çыхăннă ытти предметсем те математика çинче никĕсленеççĕ. Тарăн шухăшлав вĕренӳре çеç мар, пурнăçра та питĕ кирлĕ.

Аталанулла вĕрентӳ системипе чылай хушă ĕçленĕ май ку енĕпе нумай сăнавсем туса ирттертĕм, пĕтĕмлетӳсем турăм. Вăртăнлăх мар, аталанулла вĕрентӳ системипе ачасен шухăшлавĕ тарăнрах, вĕсен тавра курăмĕ те аслăрах. Çакна ăсчахсемпе психологсем тахçанах сăнавсем туса çирĕплетнĕ. Тĕрлĕ шайри олимпиадăсенчи, конкурссенчи çитĕнӳсем те çавнах палăртаççĕ. Аталанулла вĕрентӳ системи ачана уçăмлă, ирĕклĕ, хăй енлĕ аталанма май парать. Аталанулла системăпа ĕçлекен вĕрентекенĕн те пĕлӳ шайĕ ÿссех пырать, унченхи шайрах юлма пултараймасть.

Л. Петерсон çырнă кĕнекепе 2003 çултанпа ĕçлетĕп. Çак кĕнеке ачасен шухăшлавне тарăннăн аталанма май парать. Ку кĕнекепе вĕренме вăйлă аталаннă ачана кăна мар, вăйсăртараххине те интереслĕ те усăллă. Математика предмечĕ йывăртарах «парăнать» пулсан та, юратаççĕ вĕсем çак предмета. Ачана тата урăх мĕн кирлĕ? Тĕлĕнмелле аван шухăшласа çырнă математика кĕнекине! Анчах та ялти шкулсенче ĕçлекен вĕрентекенсем вăл кĕнекепе ĕçлеме май çукрах пуль. Мĕншĕн тесен ăна чăвашла куçарман. Кашни çулах, кĕнекесем илнĕ май, Шупашкарта ĕçлекен пуçламăш класс вĕрентекенĕсем хăш авторсен кĕнекисене суйласа илнине кăсăкланатăп. Вĕрентекенсенчен ытларахăшĕ Л. Петерсон «Математикине» суйласа илет.

Мана кăçалхи вĕренӳ çулĕнче Мускавра пулса иртнĕ «2100 вĕрентӳ системин» 15 çулхи юбилейлă конференцийĕнче пулса курма тÿр килчĕ. 15 çул хушшинче тунă çитĕнӳсене пĕтĕмлетрĕç. Чăнах та, çитĕнӳсем пĕчĕк мар. Пирĕн шкулта та çак системăпа ĕçлекен вĕрентекенсен çитĕнĕвĕсем самаях пысăк. Л. Тихонова, Т. Иосифова, Н. Чернова вĕрентекен ачасен район, республика шайĕнчи математика предмечĕн олимпиадисенчи çитĕнĕвĕсем çавнах çирĕплетеççĕ.

Нумай чухне пуçламăш классене вĕрентекенĕн «çимĕçĕ» вăтам класа куçать. Пиллĕкмĕш классем хушшинче район шайĕнче ирттернĕ математика предмечĕн олимпиадисенчи çĕнтерĕвĕсем – пуçламăш класра тарăн пĕлӳ илнин çăл куçĕ. Ăна аслă классене вĕренекен кĕске тапхăртах туса çитерейместь. Анчах та вĕренекен пуçламăш класран тухса кайсан малалла ачан тарăн шухăшлавĕ тивĕçлĕ шайра пулса пымасан, япăхса пыни те сисĕнет. Хăш-пĕр чухне вĕренекенпе вĕренекен хушшинчи хутшăну тивĕçлĕ шайра пулманнипе аван аталаннă ача та «2» паллă çине «анса ларни» те тĕл пулать.

Кам айăплă: ашшĕ-амăшĕ-и, вĕрентекен-и, класс ертÿçи-и е ача хăй? Мĕнлерех пулĕ-ши кун пек ачасен пуласлăхĕ, шăпи? Вĕрентекенсен çеç мар, ашшĕ-амăшĕн те тимлĕрех пуласчĕ ачасем тĕлĕшпе. Ытларах чухне ашшĕ-амăшĕсене хăйсен пухăвĕсенче вара курма та çук.

Пуçламăш класа вĕрентекен ачасене пуçламăш класран кăларса янă чухне питĕ кулянать: кам аллине лекĕç-ши унăн юратнă «пепкисем»? Вăл ачашăн 11 класс пĕтеричченех ответлă-и тата? Вĕрентекен шкултан медальпе тухакансене кăларать-и?

Ку вăл класс ертÿçин тивĕçĕ пулса тăрать. Кашни класс ертÿçи хăй майлă калăплать. Пирĕн шкулта пултаруллă класс ертÿçисем сахал мар. Вĕсенчен пĕри – Людмила Краснова. 1997–1998 вĕренӳ çулĕнче Л. Занковăн аталанулла вĕрентӳ системипе пĕлӳ пухнă манăн вăйлă аталаннă класс унăн аллине лекрĕ. 2004 çулта вăтам шкула саккăрăн медальсемпе вĕçлерĕ. Кунта Людмила Юрьевнăн тÿпи питĕ пысăк.

А ш ш ĕ - а м ă ш ĕ с е н е, вĕрентекенсене çаплах чĕнсе каласшăн: ача шăпи, пуласлăхĕ – пирĕн алăра, пурнăç авăрĕнче путма парас марччĕ вĕсене.

**Эпĕ хамăн юратнă 11 «а» класри тата Муркаш лицейĕнче вĕренекен ачасене вĕренӳ çулне вĕçленĕ ятпа чĕререн саламлатăп. Вĕреннĕ чухне район, республика шайĕсенчи олимпиадăсенче çĕнтерӳсем туса пынă пекех, пурнăçра та çĕнтерӳсем туса пыма, юратнă професси суйласа илме, пурнăçри йывăрлăхсене çĕнтерме, сĕр-шыва юрăхлă çынсем пулма сунатăп.**

**Редакци почтинчен**

# Ют çĕр-шыв юррисем шăранчĕç

Апрелĕн 25-мĕшĕнче улттăмĕш хут Муркаш шкулĕнче ют çĕр-шыв юррисен районти фестивалĕ "Кĕмĕл шăнкăравсем" ятпа иртрĕ. Унта 2 – 11 классенче вĕренекен ачасем çирĕм шкултан килсе çитрĕç. Фестивальте алă пилĕк юрă акăлчан чĕлхипе, иккĕшĕ вара итали чĕлхипе янăрарĕ.

Çакăнта хутшăнакансен ытларах пайĕ Муркаш, Мăн Сĕнтĕр тата Калайкасси шкулĕсенчен пулчĕ. Фестивале йĕркелесе ирттерессинче Муркаш шкулĕнче акăлчан чĕлхине вĕрентекен З. Кожевникова, Т. Маркова, С. Данилова, А. Налимова, С. Романова, Н. Толстова нумай тăрăшрĕç. Фестиваль вись номинаципе иртрĕ. Асăннă мероприяти ачасемшĕн чăн-чăн уяв пулчĕ, кашни ача сăн-питĕнче савăнăçпа хавхалану палăрчĕ.

Фестиваль пахалăхĕ те çулсеренех ÿсни курăнать.

Жюри членĕсене чи пултаруллисене палăртма йывăр пулчĕ. "Соло" номинацире кĕçĕн ушкăнри Муркаш шкулĕнче 3 класра вĕренекен О. Павлова 1 вырăна тивĕçрĕ. "Ансамбль" номинацире Мăн Сĕнтĕрсем палăрчĕç. Вăтам ушкăн ăмăртăвĕнче "Соло" номинацире Муркаш шкулĕнче 5 класра вĕренекен А. Крючкова чи пултарулли пулчĕ. "Дуэт" номинацире Муркаш шкулĕнче 7 класра вĕренекен Н. Ефанова, В. Тимофеев палăрчĕç. "Ансамбль" номинацире Йӳçкасси шкулĕнче вĕренекенсем малтуртарах пулчĕç. Аслă ушкăнра вара Муркаш лицейĕнче вĕренекен А. Железнов ыттисенчен ăстарах пулни курăнчĕ. Ятарлă хавхаланăва Калайкасси шкулĕнче вĕренекен арçын ачасем тивĕçрĕç. Фестиваль лауреачĕсем К. Енушкова (Мăн Сĕнтĕр шкулĕ), Н. Брядинская (Нискасси шкулĕ), Н. Ксенофонтова (Калайкасси шкулĕ), Л. Терентьева, К. Козлова, М. Ершова (Муркаш шкулĕ), В. Якимова (Юнкă шкулĕ) пулчĕç. Фестиваль гранприне Москакасси шкулĕнчи Д. Макарова тивĕçрĕ.

Юрă-кĕвĕ уявĕн спонсорĕсене ятран асăнса тав сăмахĕ калас килет. Евгений Субботин (Муркаш пасарĕ) тата Герман Никитин (Раççей перекет банкĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн хушма офисĕн ертÿçи) пире пысăк пулăшу пачĕç. Фестивале хутшăннисене, пулăшнисене пурне те ырлăх та сывлăх сунас килет.

**Н. ТОЛСТОВА, Муркаш шкулĕнче акăлчан чĕлхине вĕрентекен.**



**Сăн ÿкерчĕкре: çĕнтерÿçĕсен ушкăнĕ.**

# Пуçаруллисем йывăрлăхсене çĕнтереççĕ

**Паян – Раççей предпринимательствин кунĕ**



*Районта предпринимательство аталанать. Çак вăхăтра 139 пĕчĕк тата вăтам предприяти, 798 уйрăм предприниматель, вăл шутра 113 хресчен (фермер) хуçалăхĕ, 16 ял хуçалăх потребитель кооперативĕ шутланать. Вăтам тата пĕчĕк предпринимательство ĕçĕ-хĕлĕпе 2500 яхăн çын е район экономикинче вăй хуракансен 32, 6 процентĕ çыхăннă. Пĕчĕк хуçалăх формиллĕ субъектсем хăйсен вăйĕпе 2012 çулхи пĕрремĕш кварталта 83, 4 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Ку вăл 2011 çулхи çак тапхăртинчен 28 процент нумайрах.*

*Çак сăн ӳкерчĕкре эсир "Металлстрой" чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçи Алексей Ершов кунта ăсталанă эрешпе паллаштарнине куратăр. Сакăр çынран тăракан пĕрлешӳ халăх ыйтăвне туллин тивĕçтерет, туянакан кăмăлне кура хушма хуçалăхра е ытти тĕлĕшре усă курма кирек епле япала ăсталаса парать.*

*Пурнăç уттипе тан пыракан ертӳçĕ кунти ĕç-хĕле ытларах аталантарма патшалăх уйăракан гранта тивĕçнĕ.*

*– Эпĕ хамăн асатте ĕçне малалла тăсатăп. Çитес вăхăтра продукци ассортиментне татах та пуянлатасшăн, – терĕ Алексей Вячеславович.*

Харпăр хăй ĕç-хĕлне пăрахăçланă организацисем вырăнĕнче çĕнĕрен ĕç шавĕ кĕрлеттерекен производство цехĕсенче пулма тӳр килчĕ çак кунсенче. Эпир паллашнă организацисем Раççей тата ун тулашĕнчи регионсемпе тачă çыхăнура ĕçлеççĕ.

Чи малтанах ĕç ушкăнĕ Мăн Сĕнтĕрти "МирТрубПласт" чикĕллĕ яваплăхлă пĕрлешӳре пулчĕ. Ĕç тулли хăватпа пыни картишĕнченех аван курăнчĕ. Асăннă организаци тăваттăмĕш çул ĕçлет. Кунта полиэтиленран тĕрлĕ диаметрлă пăрăхсем хатĕрлеççĕ. Пысăк пахалăхлă продукципе газ, шыв, канализаци е ытти ĕçсене пурнăçланă çĕрте, çавăн пекех хушма хуçалăхра та анлăн усă кураççĕ. Туянакан йышлă пулнине кура продукци туса кăларассине çулсеренех ӳстереççĕ. Харпăрлăха куçарнă организацин икĕ цехĕнче 45 çын вăй хурать.

– "МирТрубПласт" хатĕрлекен пысăк пахалăхлă продукцие кирек хăш тăрăхра асăрхама пулать. Акă Сочи хули олимпиада ирттерме хатĕрленнĕ май тĕрлĕ калăпăшлă пăрăх унта ытларах ăсанать. Пирĕн фирмăн хушма филиалĕсем Хусанта, Мускавра, Алтайра тата ытти çĕрте ăнăçлă ĕçлеççĕ. Çитес вăхăтра вара эпир пысăкрах диаметрлă пăрăхсем хатĕрлеме пуçласшăн, – терĕ Николай Долгов директор кунти ĕçхĕлпе паллаштарнă май.

Çак территорире тулли хăватпа ĕçлекен тепĕр организаци – "Атриум" чикĕллĕ яваплăхлă общество. Кунта Европа шайĕнчи кантăксем ăсталаççĕ. Ассортимент питĕ пуян, ял çурчĕ, коттедж е ытти çурт валли тĕрлĕ форма сĕнеççĕ. Кăмăл тăвакансене премиум-класс серийĕпе е ытти тĕрлисемпе тивĕçтереççĕ. Продукцие хыр, лиственница, юман тата бинтангор йышши паха йывăçсенчен, икĕ камерлă кантăк пакетран хатĕрлеççĕ. Палăртса хăвармалла, "Атриум" продукцине ытларах пысăк тупăшлисем тата пахалăха мала хуракансем кăмăллаççĕ.

– Пирĕн продукцие туянакан яланах йышлă, çавăнпа та вăл картишĕнче купаланса выртмасть. Пирĕн тĕллев – пысăк пахалăхлă продукципе ытларах тивĕçтересси.

Ĕç ушкăнĕ иккĕмĕш çул ĕçлекен "Карина" пĕрлешӳре те пулчĕ, унти ĕç-хĕлпе паллашрĕ. Эпир пынă самантра витраж, кантăк тата ытти хăш-пĕр продукцин сутлăха ăсталамалли партийĕ хатĕрччĕ. Заказ паракансем сахал мар иккен кунта.

Мăн Сĕнтĕрти пăрахăça тухнă тепĕр объектра çынсем ĕçлени те таçтанах курăнчĕ. Шупашкарти трактор заводĕн хушма производство цехĕ хатĕр продукципе тулнăччĕ. Вăтăр çынран тăракан коллектив тимĕртен тĕрлĕ пайсем шăратса ăсталать. Хатĕр продукципе трактор пухнă çĕрте усă кураççĕ.

Лантăшри капмар çурт çинче "Сельхозхимия" тесе çырнине эпир халĕ курмастпăр. Манăçнă организаци территорийĕ пĕчĕк мар. Халĕ кунта хĕрӳ ĕç пырать. Картишĕнче чул ваклакан, вĕтетекен тата ытти пысăк агрегатсем вырнаçнине курсанах "Литстроймаш" пĕрлешӳ пысăк производствăпа тачă çыхăнса ĕçленине ăнланма пулать. Рабочисем цехсенче тимлесĕр пуçне, çĕнĕ тепĕр цех хута яма хатĕрленеççĕ.

Çапла ăнăçлă йĕркелеççĕ рынок хутшăнăвĕнче ура çинче çирĕп тăракан организацисем хăйсен ĕç-хĕлне.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Чикĕсĕр пултарулăх**

# Пĕчĕк ялтан – Селигера çити



Çак кунсенче мана пурнăçа урăхларах йышăнакан анлă тавра курăмлă çынпа – Москакасси ялĕнчи Евгений Осиповпа калаçма тӳр килчĕ. Калаçăва унăн пултарулăхĕ пирки пуçарнă май манăн чи малтанах вăл çырса хӳтĕленĕ социаллă пĕлтерĕшлĕ "Без яда", "Достучаться до небес", "Дерево мудрости" реклама проекчĕсене палăртас килчĕ. Асăннă проектсем Пĕтĕм Раççейри фестивале хутшăнма тивĕçнĕ. Çавăн пекех вăл республикăра иртнĕ конкурса "Молодежь представляет" проектпа тухма пултарчĕ. Унăн проекчĕсен тĕшши – усал йăлана сивлени; пурнăçра кашни çын, унăн сывлăх шайне пăхмасăр, пурте пĕр тан правалла пулмалли; çамрăксенче çутă пуласлăха курни.

– Çын сиенлĕ йăлапа туслашнине эпĕ ăнланмастăп, енчен те вăл пурнăçа чăннипех те хаклать пулсан унăн усалли пирки шухăш пачах та пулмĕ, – терĕ Евгений хăй ĕçĕсемпе паллаштарнă май.

Женя вара пурнăçа мĕн ачаллах хаклама вĕреннĕ, ырри патне туртăннă, усаллине сивленĕ. Пушă вăхăтра тĕрлĕ кĕнеке вулама юратнă, ăс-тăна çивĕчлетекен вăййсем кăмăланă. Халсăр чĕр чунсене пулăшма тăрăшнă, шăнкăрч вĕлли, кайăк сырăшĕ сахал мар ăсталанă. Вĕренӳре кая юлса пыракана пулăшма тăрăшнă. Çын йывăрлăхне ăнланнăранах пулĕ "Подари улыбку детям" ырă кăмăллăх акцине йĕркелеме тата ирттерме активлă хутшăнчĕ. Вăл, Раççейри куç курманнисен районти обществăлла организацийĕн членĕ пулнă май, кунти мероприятисене те активлă хутшăнать. Палăртма кăмăллă, вăхăтпа туллин усă куракан çамрăк юрă-кĕвĕ тĕнчине те аван ăнланать, алла гитара тытса пĕр-пĕр юрă шăратма пултарать. Шел те ăна валли вăхăчĕ сахалрах.

Шкул çулне çитсен вара куç япăх куракансен Шупашкарти ятарлă шкулĕнче вĕреннĕ. Пур енĕпе те кăсăкланакан кĕлеткерен пĕчĕк ачана кунта чи малтан Нина Семеновна воспитатель асăрхать. Ăна тĕрлĕ секцие, кружока çӳреме пулăшать.

Аслă педагог тăрăшăвĕ вара сая каймасть. Кĕçех мероприятисенче Женьăн пултарулăхне асăрхаççĕ. Шкултан вĕренсе тухсан вăл аслă пĕлӳ илет, пурнăç çулĕ çине социаллă ĕç специальноçпе тухать. Вĕреннипе пĕрлех обществăлла ĕçе активлă хутшăнать.

Ачаллах спортпа туслашни ăна малашне пысăк çитĕнӳсем тума пулăшать. Шашкăлла ăмăртассипе вăл спорт мастерĕн кандидачĕ, шахмат енĕпе иккĕмĕш разряда тивĕçнĕ. Туризм енĕпе (многоборье) Раççей чемпионатне хутшăннă. Çавăн пекех вăл рафтинг шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн Селигер шывĕ çинче инноваци форумĕн ăмăртăвĕнче (параллельный спринт) вăй висчĕ. Вăл хутшăннă ăмăртусене татах та асăнма пулать, чылай пысăк хуласенче пулма тӳр килнĕ ăна. Тĕрлĕ ĕçре тивĕçнĕ Хисеп грамотисен йышне пăхсан пĕр-пĕр кĕнеке тейĕн. Женьăн пултарулăхне вара республика шайĕнче пысăк вырăна хурса хакларĕç, вăл Чăваш Республикин Президенчĕн стипендине тивĕçнĕччĕ.

**Р. МАКАРОВА.**

**Прокуратурăра**

# Пулăсем мĕншĕн вилнĕ?

**"Хаçатра маларах Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Катăкуйĕнчи уйрăм çын пĕвинче пулăсем йышлă вилни пирки çырнăччĕ-ха. Çак инкек сăлтавĕ мĕнре пулнă-ши?"**

**Редакцие килнĕ çыруран.**

***Ку ыйту тĕлĕшпе эпир район прокурорĕн пулăшуçипе А. ЧЕРНОВПА çыхăнтăмăр. Акă мĕн пĕлтерчĕ вăл пире:***

– Инкек сăлтавне палăртма апрелĕн 28-мĕшĕнче пĕвери пулăсене, шыва ятарлă экспертизăна янă. Майăн 2-мĕшĕнче ирттернĕ гидрохими тĕпчевĕн пĕтĕмлетĕвĕнчен çакă паллă пулчĕ. Пĕвери шыв пахалăхĕсăр пулнă, вăл çак отраслĕн стандартпа килĕшсе тăман. Шывра тăвар аммиакĕн шайĕ пысăк, хăш-пĕр пайсем (активная реакция воды (рН), жесткости) вара пĕчĕк пулни палăрнă. Пулăсем тĕлĕшпе кăлтăк тупман.

**Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче**

# Ача сачĕ çĕнелет

Москакассинчи «Колокольчик» ача садĕнче çĕнĕрен «Пчелки» ушкăн йĕркеленĕрнипе вăхăт нумаях мар. Апла пулин те чăн-чăн пыл хурчĕсем ĕçлеççĕ пулĕ тейĕн кунта. Н. Миронова воспитатель ертсе пынипе асăннă ушкăна кĕске вăхăтра хăт кĕчĕ.

Пурнăç хуменчен кая юлмаççĕ садикри ытти ĕçченсем те. 29 çул хушшинче ача-пăчасен сĕтел-пуканĕ самаях кивелнĕччĕ. Халĕ ашшĕ-амăшĕсем пулăшнипе кашни ушкăнрах вĕренӳ кĕтесĕсенче илемлĕ çӳлĕксем, теттесене вырнаçтармалли хăтлă шкафсем хăйсем патне илĕртеççĕ. Пуканесене тутлă апат «пĕçерсе çитерме» кухня гарнитурĕ те пур. Çирĕп те илемлĕ сĕтел-пукан татах темиçе çул хушши ачасене савăнтарасса шанатпăр, ашшĕ-амăшĕсене чунтан тав сăмахĕ калатпăр.

«Веселята» ушкăн ачисемпе ĕçлекенсем уйрăмах И. Терентьевăна пысăк тавтапуç калаççĕ. Вăл тăрăшнипе ăсталаса панă шкафсене выляна хыççăн теттесене вырнаçтарса хума питĕ кăмăллă.

Сăмах май Инга Петровна Çĕнĕ çул ячĕпе садике «Типĕ бассейн» тата çемçе модульсем парнеленĕччĕ. Ăста педагогсем çак пособисемпе усă курса ачасене тĕрлĕ енĕ аталантараççĕ.

**П. ЛЕБЕДЕВА,**
**ача сачĕн воспитателĕ.**

**Çирĕп йăлана тăснă май**

# "Зарница" тата "Орленок" – 44-мĕш хут

Майăн 18 – 19-мĕшĕсенче районта çамрăк армеецсен "Зарница" тата "Орленок" çарпа спорт ăмăртăвĕсем 44-мĕш хут иртрĕç. Ăмăртăва "Зарница" 21 ушкăн, "Орленок" 9 ушкăн, çарпа патриотика клубĕн 4 ушкăнĕ хутшăнчĕ. Кунта пухăннисене район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, республикăри Çар комиссариачĕн Муркашпа Элĕк районĕсенчи пайĕн ертӳçи А. Кочуров, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи З. Дипломатова саламларĕç, умри йывăрлăха çĕнтерме çирĕп сывлăх сунчĕç.

Шкул ачисен тĕрлĕ ушкăнĕ икĕ кун чупассипе, ишессипе тата ытти чылай номинацире вăй висрĕ. "Зарница" уйрăмĕпе Мăн Сĕнтĕрсем пултаруллăрах пулчĕç. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Муркашсемпе Кашмашсем тивĕçрĕç. Ку ушкăнра Шурча шкулĕн вĕренекенĕ М. Бурцев чи пултаруллă командир пулчĕ.

"Орленокра" Мăн Сĕнтĕрсем пĕрремĕш вырăна тивĕçрĕç. Орининсемпе Йӳçкассисем иккĕмĕшпе виççĕмĕш пулчĕç. Ку ушкăнри чи лайăх ертӳçĕ – Йӳçкасси шкулĕнче вĕренекен Г. Васильев.



Çарпа патриотика клубĕсен ушкăнĕнче "Родина" (Муркаш шкулĕ) малти вырăна тухрĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Муркаш лицейĕн кадечĕсемпе "Юнга" (Юнка шкулĕ) патриочĕсем йышăнчĕç. Ку ушкăнри чи лайăх ертӳçĕ Муркаш лицейĕнче вĕренекен С. Утрейкин пулчĕ. Тивĕçлисем Хисеп грамотисене, Тав çырăвĕсене, кубокпа çӳрекен кубоксене тивĕçрĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**
**Н. ПАВЛОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Халăх председателĕ, пултаруллă ертӳçĕ

**Районăн паллă çыннисем**



**(Малалли. Пуçл. иртнĕ номерте).**

Пысăкланнă хуçалăх йĕркеленсе ĕçлеме пуçласанах Е. Андреев колхозра строительсен бригадисене йĕркеленĕ. Ку вăл çĕнĕ ертӳçĕн малашлăха пăхса тунă пуçламăш утăмĕсенчен пĕри шутланать. Малтанхи икĕ бригадăна А. Илларионовпа А. Максимова ертсе пыма шаннă. Каярахпа вĕсем çумне П. Воробьевпа А. Дмитриев бригадисем хушăннă. Атăл урлă кайса колхоз валли йывăçпа вутă хатĕрлес ĕçсене Ф. Киселевпа П. Димитриев бригадисем яваплăха туйса пурнăçласа пынă. Вĕсем çулсерен 1000 кубла метр ытла йывăç хатĕрлеме пултарнă. Çак материалпа колхоз малтанах фермăсемпе лаша витисене çĕнетсе пысăклатма усă курнă. Производство объекчĕсене хутса ăшăтма хĕл кунĕсенче вутти те самай кайнă. 1953 çулта строительство бригадисенче пурĕ 58 çын вăй хунă. Вĕсен тăрăшулăхĕпе нумай ĕçсем туса ирттернĕ, малашлăх аталанăвĕн никĕсне хывнă.

Пысăклатнă хуçалăх аталанăвĕн çулĕсем вăрçă хыççăнхи тапхăрпа тӳр килнĕрен, вăл вăхăтра пур колхозсенче те обществăлла выльăх-чĕрлĕхе аталантарасси çине пысăк тимлĕх уйăрнă. Мĕншĕн тесен çак çул колхозсен патшалăх умĕнчи обязательствисене ăнăçлăн пурнăçламалли тĕп мел пулнă. Çакна хуçалăх ертӳçисем те, колхозниксем те ăнланнă. Ăна шута хурса Муркашсен пĕрлештернĕ ĕне фермин заведующийĕ пулма ăста специалиста П. Онькова, сысна фермине ертсе пыма И. Огурцова шаннă. Шанăçа çилпе вĕçтермен вĕсем. Тăрăшуллă ĕçшĕн Иван Семенович хăй ячĕллĕ велосипед-парнене тивĕçнĕ, ВДНХ кĕмĕл медальне çĕнсе илме пултарнă.

Тăтăш малалла пăхакан хуçалăх ĕне тата сысна ĕрчетессипе çеç лăпланса ларман. Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче сурăхсем те, чăх-чĕп те, мăйракаллă шултра выльăх та пулнă. Вĕсем те кашниех ӳсĕм çулĕпе аталанса пынă. Унта ĕçлекенсен район тата республика умĕнче пит хĕретме тивмен. Вăл çулсенче хресченĕн патшалăх умĕнчи обязательствисен шутне ашкакайпа сĕтсĕр пуçне çăм, çăмарта, брынза-сыр, сурăхсемпе ĕне выльăхсен тата сыснасен тирĕ кĕнĕ. Тĕслĕхрен, пĕр гектар çĕр пуçне колхозсем патшалăх пӳлмине 2,5 кг аш, 16 литр сĕт, 150 грамм çăм, 65 грамм брынза, 3 çăмарта панă. Ку йĕркене 1953 çул хыççăн патшалăх çăмăллатнă. Анчах ӳсĕм çулĕ çине тăнă «Знамя труда» колхозшăн çакă лăпланмалли сăлтав пулман. Вĕсем пĕрешкел условисенчех ыттисенчен ытларах та ытларах тупăш илме вĕренсе пынă. Ырми-канми ĕçлекен колхозниксем те райцентрти чиновниксенчен ытларах ĕç укçи илме пуçланă. Çакă ĕçлекен çынна тивĕçтернĕ те, савăнтарнă та.

Евтихий Андреевич уйрăмах сысна ĕрчетесси çине пысăк тимлĕх уйăрнă. Çакна 1951 – 1953 çулсенче сыснасен йышĕ колхозра 289 пуçран 436 пуçа çитни те çирĕплетет. 1952 çулта колхоз сысна ферминчен çеç 260 пин тенкĕ ытла тупăш илнĕ. Ку вăл хуçалăхăн пĕтĕм тупăшĕн 39 процентĕ пулнă. 1954 çулта вара çак кăтарту 400 пин тенкĕне çитнĕ.

Хуçалăх ĕçченĕсем выльăх-чĕрлĕх отраслĕнчи ĕçсене зооинженери науки ыйтнă пек туса пыма тăрăшнă. Çакна валли колхозра зоотехникăна вĕренмелли виçĕ уйăхлăх курссем ĕçленĕ. Унтан вĕренсе тухакансене ял хуçалăхĕн 1-мĕш разрядлă маçтăрĕн аттестатне панă, ĕç укçине те ытларах тӳленĕ. Выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсем тĕлĕшпе пысăк тимлĕх уйăрни çакăнтан та курăнать. 1953 çулхи ĕç кăтартăвĕсемпе сысна пăхакан 3 ĕçчене (Елена Гавриловăна, Варвара Андреевăна, Зинаида Федоровăна) «Республикăри чи лайăх сысна пăхакан» хисеплĕ ят панă. Çав çул республикипе ку чыса 115 ĕçчен тивĕçнĕ.

Муркашсен производствăри ӳсĕм вăрттăнлăхĕ вăл ĕçе юратни, ăна вăхăтра пурнăçлани пулнă. Ку вăрттăнлăхсем сысна самăртнă çĕрте те, сĕт сунă чухне те, тыр-пулпа çĕр улми туса илессинче те тĕп вырăнта тăнă. Çавăнпах ĕнтĕ иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсен варринче Муркашсен производство кăтартăвĕсем республикăн вăтам ӳсĕмĕсенчен пур енпе те малта тăнă.

**(Вĕçĕ пулать).**
**В. ФЕДОРОВ.**

**Судра**

# Айăплантăн – явапне те тыт

Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе килĕшӳллĕн кашни çыннăн хăйĕн сывлăхне сыхлама право пур. Кунсăр пуçне Конституци çынна хăйĕн прависемпе ирĕкĕсене судпа хӳтĕлеме шантарать.

Çыннăн сывлăхне сиен кӳме никам та ирĕклĕ мар. Çыннăн сывлăхне е пурнăçне хирĕç преступлени тунăшăн, апла пулсан сиен кӳнĕшĕн, наказание Раççей Федерацийĕн Уголовлă кодексĕн 16 пайĕнче пăхса хунă. Айăплав ирĕкрен хăтарасси таранах пулма пултарать.

2012 çул пуçланнăранпа çыннăн сывлăхне е пурнăçне хирĕç преступлени тунăшăн Муркаш районĕнчи миравай судьясен икĕ участокĕнче пурĕ 54 ĕç тишкернĕ.

Çапла 2011 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнче «Путь Ильича» агрофирма территорийĕнче Алимасов гражданин (кунта тата текстра малалла хушамачĕсене улăштарнă) тепĕр çынпа хирĕçсе каять. Ăна ырattарас тесех пуçран та, ытти çĕртен те пĕрре мар çапать: пуç мимине амантать, юн кайма пуçлать. Суранланнă çыннăн 21 кун ытла сипленме тивет. Ку вара сывлăха вăтам йывăрлăхлă сиен кӳнипе танлашать. Ку суранпа пĕрлех сиен курнă çыннăн кăкăр таврашĕ те, аллисем те кăвакараççĕ.

Çак ĕçе тишкернĕ хыççăн миравай судья Алимасовăн айăпне – вăл тепĕр çыннăн сывлăхне вăтам йывăрлăхлă сиен кӳнине – çирĕплетсе парать. Суд айăпланă гражданинăн ирĕкне 1 çуллăх чакарма йышăну тăвать. Унпа килĕшӳллĕн халĕ патшалăхăн наказанисене пурнăçланине тĕрĕслесе тăракан ятарлă органа пĕлтермесĕр Алимасовăн пурăнакан вырăна, ĕç вырăнне улăштарма юрамасть, муниципаллă хăй тытăмлăх йĕркеленӳ территорийĕнчен те тухса кайма юрамасть, кашни уйăхрах регистрацие çӳремелле.

Алимасов приговорпа килĕшнĕ, халĕ палăртнă наказание пурнăçлать.

Меркин гражданин та çакăн майлă преступлени тунă. Кăçал январĕн 31-мĕшĕнче вăл ӳсĕрле хăйпе пĕрле пурăнакан хĕрарăма турчăкапа хĕнет. Алă-урараn, пуçран – пăхса тăмасть. Хĕрарăмăн çамка çинчи ӳчĕ касăлса каять, сулахай аллинчи шăмă та хуçăлать.

Çак ĕçе тишкернĕ хыççăн та миравай судья Меркинăн айăпне – вăл тепĕр çыннăн сывлăхне вăтам йывăрлăхлă сиен кӳнине – çирĕплетсе парать. Меркин вара малтан та судпа айăпланнăскер пулнă. Малтанхи приговор çумне (наказание пурнăçлассин тапхăрĕ вĕçленмен) хальхи хушăнать: вунă уйăх та пилĕк кунлăх ирĕкрен хăтарса колони-поселение каймалла пулса тухать.

Кун пек йышăнăва суд пур чухне те тумасть. Сăмахран, Липов гражданина колони-поселенине суд залĕнченех конвойпа ăсатма йышăнаççĕ. Унччен судпа айăпланнăскер обязательнăй ĕçсене йĕркеллĕ пурнăçламан, эрехсăра ĕçнĕ. Районти ĕç тăвакан инспекци пуçлăхĕ çак сăлтавпа ĕнтĕ Липовăн наказанине (пурнăçламан тапхăрне) ирĕкрен хăтарассипе ылмаштарма ыйтса суда ходатайствăпа тухать. Арçын уголовлă ĕçе тишкернĕ чух суда та пыман, пурăнакан е ĕç вырăнне пĕлтермесĕр улăштарнă, приговор вăя кĕрсен ĕç тăвакан инспекцие пыман – кӳршĕ облаçе ĕçлеме тухса кайнă. Ăна колони-поселение конвойпа ăсатни çакăнпа çирĕппĕнех никĕсленет.

**Т. САЛДЫРКИНА,**
**миравай судья.**

# Ĕç Геройĕ Е. Андреев пирки мĕн пĕлетĕр?

**Викторина**

***Социализмла Ĕç Геройĕ Евтихий Андреевич Андреев çуралнăранпа 100 çул çитрĕ. Хамăрăн паллă ентешĕмĕре халалласа район хаçачĕ вулавçăсемпе, уйрăмах шкулта вĕренекенсемпе викторина ирттерет. Çĕнтерӳçĕсем парнесене тивĕçĕç. Хуравсене хаçат редакцийĕнче çĕртме уйăхĕн 9-мĕшĕччен кĕтетпĕр. Викторина ыйтăвĕсене хуравланă чухне ответсен пĕр вариантне кăна суйласа илмелле.***

1. Агрепина Семеновнăпа Андрей Васильевич çемйинче Евтихий миçемĕш ача пулнă?
а) Пĕрремĕш;
ă) Тăваттăмĕш;
б) Саккăрмĕш.

2. Евтихий амăшне Агрепина Семеновнăна 1945 çулта 8 ача ӳстернĕшĕн:
а) «Ача амăшĕ» орденпа наградăланă;
ă) «Ача амăшĕ - героиня» ят панă;
б) «Амăш мухтавĕ» медальпе наградăланă.

3. 1927 çулта Евтихий çак шкултан вĕренсе тухнă:
а) Етĕрнери педагогика техникумĕнчен;
ă) Мăн Чурашри икĕ класлă шкултан;
б) Хресчен çамрăкĕсен Мăн Чурашри шкулĕн 6 класĕнчен.

4. Андреевсен хуçалăхĕ «Сеятель» колхоза кĕнĕ:
а) колхоз йĕркеленнĕ çул, 1930 çулхи пуш уйăхĕнче;
ă) 1931 çулта;
б) 1933 çулта.

5. Е. Андреев ВЛКСМ ретĕнче тăнă:
а) 1931 – 1939 çулсенче 27 çул тултариччен;
ă) 1931 – 1940 çулсенче;
б) 1930 – 1939 çулсенче.

6. Е. Андреев 1932 – 1933 çулсенче счетовод-бухгалтерсен курсĕнче çакăнта вĕреннĕ:
а) Шупашкарти рабфакра;
ă) Мускаври финанс техникумĕнче;
б) Ленинградри соцзембанкра.

7. Евтихий Андреевич ВКП(б) членне 1940 çулхи утă уйăхĕн 18-мĕшĕнче кĕнĕ. Ăна рекомендаци паракансенчен пĕри хăшĕ пулнă?
а) Совет Союзĕн пулас Геройĕ Я. Анисимов;
ă) Совет Союзĕн пулас Геройĕ А. Воробьев;
б) Совет Союзĕн пулас Геройĕ Б. Васильев.

8. ВКП(б) членне кĕнĕ вăхăтра Е. Андреев:
а) «Сеятель» колхозăн счетоводĕ пулнă;
ă) Сĕнтĕр районĕн вăрман хатĕрлевĕн директорĕнче ĕçленĕ;
б) «Сеятель» колхоз председателĕ пулнă.

9. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланнă чух политработниксен курсĕнче вĕреннĕ:
а) Вăрнарти вĕрентӳ полкĕнче;
ă) Мускав çывăхĕнче;
б) Минскра.

10. Е. Андреева Хĕрлĕ Çартан демобилизациленĕ:
а) 1946 çулхи пуш уйăхĕнче;
ă) 1947 çулхи пуш уйăхĕнче;
б) 1948 çулхи пуш уйăхĕнче.

11. Муркашри пĕрлештернĕ колхоз председательне суйланă чух Е. Андреев çак ĕçре вăй хунă:
а) Советски районĕнчи хатĕрлев министерствин уполномоченнăйĕн заместителĕнче;
ă) Муркаш районĕнчи хатĕрлев министерствин уполномоченнăйĕн заместителĕнче;
б) Муркаш районĕнчи хатĕрлев министерствин уполномоченнăйĕнче.

12. 1941 çулхи утă уйăхĕнче Аслă Отечественнăй вăрçă хирĕнче Е. Андреевăн çак тăванĕ пуç хунă:
а) Степан;
ă) Виктор;
б) Николай.

13. Е. Андреевăн çывăх тăванĕсенчен пĕри Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине полковник званипе вĕçленĕ тата Ленинградра службăра тăнă:
а) Степан;
ă) Николай;
б) Борис.

14. Е. Андреевăн çывăх тăванĕсенчен пĕри «Сеятель» колхоз председателĕ пулнă, Чемей ял Совечĕн ертӳçинче ĕçленĕ. Вăл:
а) Николай;
ă) Виктор;
б) Степан.

15. Тăванĕсем патне почта урлă янă пĕр сăн ӳкерчĕк хыçĕнче çапла çырни пур: «Минск хула Совечĕн членĕ, çар чаçĕн ВЛКСМ бюро членĕ». Çак сăн ӳкерчĕке хăçан тунă?
а) Вăрçă пуçланиччен действительнăй çар службинче чух;
ă) Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче;
б) Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн.

16. «Манăн рота стройпа утассипе округра яланах пĕрремĕшчĕ», – тенĕ Е. Андреев. Хăш вăхăтпа тӳр килет çакă?
а) Аслă Отечественнăй вăрçăччен Беларуçре службăра тăнă вăхăтпа;
ă) Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсемпе;
б) Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн Мускаври çар округĕнче службăра тăнă вăхăтпа.

17. Хăйне Муркашри пĕрлештернĕ колхоз председательне суйланă хыççăн кун пирки Е. Андреев çапла каланă:
а) «Мансăрах мана авлантарчĕç»;
ă) «Мана кирек ăçта ĕçлесен те пĕрехчĕ»;
б) «Ку вăл парти райкомĕн йышăнăвĕ пулчĕ».

18. 1951 çулхи нарăс уйăхĕнче Муркашсен 5 колхозне пĕрлештерсен çĕнĕ колхоз ячĕ çапла пулнă:
а) Сталин ячĕллĕ колхоз;
ă) «Знамя труда» колхоз;
б) Буденный ячĕллĕ колхоз.

19. Е. Андреев ертсе пыракан колхоз 30 çул хушшинче патшалăхран пĕрре тата юлашки хут 90 пин тенкĕ ссуда илнĕ:
а) 1951 çулта;
ă) 1966 çулта;
б) 1972 çулта.

20. Пĕрлештернĕ колхоз правленийĕн пĕрремĕш составĕнче председатель заместителĕ кам пулнă?
а) З. Магаев;
ă) В. Чубуков;
б) Совет Союзĕн Геройĕ А. Воробьев.

21. 1954 çулта Чăваш кĕнеке издательствинче кун çути курнă «Малта пыракан сысна ферми» (чăвашла) кĕнекене Е. Андреев кампа пĕрле çырнă?
а) З. Магаевпа;
ă) М. Осиповпа;
б) В. Чубуковпа.

22. 1955 çулта Е. Андреева РСФСР Верховнăй Совечĕн депутатне суйланă. Суйлав тапхăрĕнче унăн шаннă çынни пулнă:
а) Нурăс районĕнчи КПСС райкомĕн 1-мĕш секретарĕ И. Прокопьев;
ă) П. Хусанкай поэт;
б) Болгари поэчĕ Ангел Тодоров.

23. А. Николаев космонавт Муркаша пĕрремĕш килсен (1964 çул) Е. Андреев ăна çунапа ярăнтарнă. Лаша ячĕ:
а) Бабочка;
ă) Катюша;
б) Стрела.

24. 1965 çулта Е. Андреев Чăваш делегацийĕпе туристсен путевкипе 2 эрне хушши пулнă:
а) Болгарире;
ă) Германире;
б) Финляндире.

25. Хăш поэт Е. Андреевпа тĕл пулу ирттернĕ хыççăн «Нимене! Нимене!» сăвă çырнă?
а) А. Воробьев;
ă) Г. Ефимов;
б) П. Хусанкай.

26. Ял хуçалăхĕнчи ӳсĕмлĕ ĕçшĕн Е. Андреева Социализмла Ĕç Геройĕн ятне панă:
а) 1963 çулта;
ă) 1966 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче;
б) 1972 çулта.

27. РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулнă май Е. Андреева пĕрре кăна мар хăйĕн патĕнче йышăннă:
а) И. Сталин;
ă) Н. Хрущев;
б) Л. Брежнев.

28. Хăй вăхăтĕнчисен аса илĕвĕнчен Е. Андреев çапларах пулнă:
а) Шупашкар ГЭСне тума хирĕçленĕ;
ă) Шупашкар ГЭСне тăвассишĕн тăрăшнă;
б) Ку ыйту уншăн пурпĕрех пулнă.

29. 1964 çулхи пуш уйăхĕн 10-мĕшĕнче производство управленийĕн парткомĕн бюро членĕ Е. Андреев районти конференцире тухса каласнă:
а) район центрне Мăн Сĕнтĕртен Муркаша куçарассишĕн;
ă) район центрне Мăн Сĕнтĕртех хăварассишĕн;
б) район центрне Кӳкеçе куçарассишĕн.

30. Çак паллă председательсем Е. Андреева хăйсен учителĕ тесе хисепленĕ:
а) А. Айдак, В. Павлов, К. Сретинский;
ă) С. Афанасьев, А. Михайлов, П. Давыдов;
б) пур хуравсем те тĕрĕс.

31. Е. Андреев призĕсемшĕн йĕлтĕрпе ăмăртассине районта хăçан пуçласа янă?
а) Е. Андреев пурăннă чухнех;
ă) Е. Андреев вилнĕ хыççăн;
б) 2002 çулта.

32. Евтихий Андреевичпа «Знамя труда» колхозра пĕрле тата пĕр ылмашăнмасăр агроном та, трактор бригадин бригадирĕ те, парти комитечĕн секретарĕ те пулса ĕçленĕ:
а) Е. Ильина;
ă) И. Огурцов;
б) П. Оньков.

33. Е. Андреев çапла каланă: «Ĕçпе тивĕçтересси –
а) пирĕн тĕп тивĕç»;
ă) колхозри тĕп тĕллев мар»;
б) пирĕн ĕç мар».

34. Е. Андреев çапла çырнă: «Çамрăксен пирĕн паянхи пурнăçран, пирĕн ĕç опытĕнчен вĕренмелли, ăна пуянлатмалли самай. Çамрăксем çĕнĕлле ĕçлĕç. Вĕсен опычĕ:
а) пирĕннинчен те лайăхрах пулĕ»;
ă) пирĕннинчен япăхрах пулĕ»;
б) çамрăксемшĕн пачах кирлĕ пулмĕ».

35. Е. Андреев ертсе пынă колхоз уставĕпе килĕшӳллĕн колхозниксене ĕç укçине тӳленĕ:
а) вăхăтпа;
ă) ĕç тунипе тата премилесе;
б) туса илнĕ продукципе ĕç кунĕпе.

36. Мускав журналисчĕ Н. Чепунова шухăшĕпе Е. Андреев ĕçхĕлĕн экономика тата йĕркелӳ тĕллевĕсем:
а) хресчен ертӳçĕ ĕçĕнчен пайта куртăр;
ă) никам та кăмăлсăр ан юлтăр;
б) пурте колхозран тухса кайчăр.

37. Н. Чепунова: «Икĕ çул хушшинче колхоза малти рете кăларма епле май килчĕ», – тесе ыйтсан Е. Андреев çапла хурав панă:
а) «Эпĕ мала кăлартăм. Колхозниксем мана пулăшрĕç»;
ă) «Парти райкомĕ мала кăларчĕ»;
б) «Колхозниксем мала кăларчĕç. Эпĕ вĕсене мĕн тупăшлине тата тухăççăррине кăтартса пытăм».

38. Н. Чепунова шучĕпе Е. Андреев девизĕ:
а) «Харпăр хăйĕн усси малта пултăр»;
ă) «Çӳлтисем» çеç манпа кăмăллă пулччăр»;
б) «Пĕрремĕш тимлĕх экономика патне, тенкĕ патне, шутлав патне».

39. Е. Андреев вилнĕ тĕле «Знамя труда» колхоз счечĕ çинче 3 миллион тенкĕ ытла укça пулнă. Унпа вăл вăхăтра «ДТ-75» трактор туянма май пулнă:
а) Пĕрре;
ă) Вуннă;
б) Çĕр.

40. «Знамя труда» колхоза Е. Андреев ятне панă:
а) 1981 çулхи çĕртме уйăхĕнче;
ă) 1982 çулхи çĕртме уйăхĕнче;
б) 1983 çулхи çĕртме уйăхĕнче.

**Ыйтусене Валерий ФЕДОРОВ обществăлла корреспондент хатĕрленĕ.**

# Кил тата хушма хуçалăх



## Урамра та пахчари пекех



«Тирпейлĕ çыннăн ĕçĕ те тирпейлĕ пулать», – тетчĕ пур ĕçре те йĕркене юратнă анне…

Муркаш сали юлашки çулсенче чечек йăранĕсемпе туслашнине пурте хăнăхрăмăр. Иртнĕ кунсенче вара Муркаш урамĕсене чечексем лартассипе субботник иртрĕ.

– Урамсенчи илеме пĕрре хăнăхрăмăр та çулсем хĕррипе чечексем çукки пысăк çухату евĕр туйăнать. Çавăнпа та Муркаш ял тăрăхĕпе район администрацийĕ чечексем лартма тухма ыйтсан пĕр сăмахсăрах килĕшрĕм. Ырă ĕç-çке ку. Вăл вара ырăпах таврăнĕ, – чечек лартнă хушăрах калаçаççĕ Вера Романовăпа Нина Мироваева **(сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла)**. Вĕсем лартнă чечексене шăваракан Гена Илларионов та **(2-мĕш сăн ӳкерчĕкре)** район центрне чечексем лартнă хыççăн çĕнĕ сăн кĕнине пытармасть. «Чечексем лартнă хыççăн хăт кĕрет», – терĕ пĕрлехи дежурнăй-диспетчер службин диспетчерĕ çак ĕçе хăйĕн кану кунĕнче тухнине палăртса.





Чечек пурнăç илемĕ пулнине район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн методисчĕ Вера Васильевна Романова хăйĕн пĕтĕм ĕç ĕмĕрĕпе çирĕплетет.

– Чечек лартасси – манăн пурнăçăн уйрăлми пайĕ. Ача чухне килте астрăсемпе ноготкисем çеç лартаттăм. Çулсем иртнĕ май çак юрату та анлăланчĕ. Халĕ килти хушма хуçалăхра çулленех çĕнĕрен 1-2 чечек лартатăп. Хамăр çемьепе Опрыскьялĕнчи хушма хуçалăхра та, Муркашри хваттер умĕнчи йăран çинче те вуншар тĕрлĕ чечек ӳстеретпĕр, – калаçăва анлăлатрĕ методист. – Ялта бархатцăсем, пионсем, цинний, лаватерсем, астрăсем, георгинсемпе флоксăсем йышлă пулсан, хваттер умĕнчи йăран çинче георгинсем, гладиолуссем, пионсем, тигр лилийĕсем (тигровые лилии), кĕл чечекĕсемпе тюльпансем йышлă.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



## Çи витти сăрлар

***Район хаçатĕнче «Кил тата хушма хуçалăх» кăларăм тухнине ырлатăп. Мана вара паян пӳртĕн çи виттине сăрласси пăшăрхантарать. 38 çул каялла цинклă тимĕрпе витнĕскер çинче тутăхнă вырăнсем курăнма пуçларĕç. Мĕнле сăрăпа усă курсан аванрах-ши?***

**Иван ЕФРЕМОВ.**

«Приусадебное хозяйство» журналта кун евĕр ыйту çине çапла хурав пур: «Цинкпа витнĕ тимĕре сăрлама ятарлă сăрă туянмалла. Кусем вĕсем – Цикроль (тимĕре тутăхсран хӳтĕлекен, шыв сăрхăнтарман, ялтăртатман акрил сăрă) тата Сереброл (тутăхсран хӳтĕлекен, шыва чăтакан алюмини сăрă). Вĕсем питĕ хаклă.

Алкидлă тата çуллă сăрăпа сăрлама кирлĕ мар, мĕншĕн тесен вĕсем çулталăкран ытла чăтмаççĕ. Акрил эмалĕ вара темиçе çул чип-чиперех тăрĕ.

40 çула яхăн чăтнă хĕç тимĕр «ватăлнă» ĕнтĕ. Специалистсем пӳрт çивиттине çĕнĕрен витме сĕнеççĕ.

**Хаçат редакцийĕ.**



## Вăрманта тирпейлĕ пул

«Вăрăран юлать те – пушартан юлмасть», – тесе мăн асаттесем тĕрĕсех каланă. Çакна кулленхи пурнăç тăтăш çирĕплетсе парать. Вăрмансене Çĕр планета ӳпкисем тесе пăхатпăр пулсан, вĕсенче пушар тухни пурнăça пăвнă пекех пулса тухать.

«Халăха çут çанталăкри чрезвычайлă лару-тăруран тата техногенлă характерлă инкексенчен сыхласси çинчен» Федераллă Саккуна пурнăçласа вăрмансенче пушар хăрушлăхĕ ӳснĕрен район администрацийĕ «Вăрмансене транспорт хатĕрĕсем кĕртессине тата унта çынсем пулассине чакарасси çинчен» йышăну кăларчĕ.

Асăннă йышăну çу уйăхĕн 21-мĕшĕнчен вăя кĕчĕ. Çавăнпа та çĕнĕ лару-тăрура вăрмана кĕме «Сăнавлă вăрман хуçалăхĕ» учрежденин Ильинкăри участок лесничествин лесничийĕнчен А. Касьяновран ирĕк илмелле. Çакă вăрманти пушар хăрушсăрлăхне ӳстерме пулăшасси пирки никамăн та иккĕленӳ çук.

Йышăнура Ильинка участок лесничествин лесничине А. Касьянова вăрмансене кĕрекен çулсем çинче шлагбаумсем лартма, пушар хăрушсăрлăхĕпе аншлагсем вырнаçтарма сĕннĕ. Çак ĕçре вырăнти массăллă информаци хатĕрĕсем пысăк пулăшу парассипе шанчăк пуррине палăртнă.

Иртнĕ çулсенче асăрхаттарусем пулнă пулин те, вăрмана канма тухакансен тимсĕрлĕхĕпе тата вĕсем канура пушар хăрушсăрлăх правилисене сĕмсĕррĕн пăснипе, чĕртнĕ кăвайтта асăрханманран сăнавлă вăрман хуçалăхĕн территорийĕнчи вăрмансенче вут-кăвар алхасма пуçланă тĕслĕхсем пулнăччĕ.

Апла-и, капла-и, анчах асăрханулăх ытлашши пулмĕ. Çавăнпа та вăрманта вут чĕртекенĕн самантлăх асăрханусăрлăхĕ вăрман пуянлăхне сарассишĕн тăрăшнă вуншар-çĕршер çыннăн ĕçне кĕске вăхăтрах кĕллентерме пултарнине асра тытмалла. Вут-кăвар ан тухтăр тата саккун ыйтнине пăсас мар тесен вăрмана ĕçлеме е канма тухас шухăшлисен пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнассине тĕп вырăнта тытмалла.

**А. ПЕТРОВ.**



## Пĕр кубла метрта миçе хăма?

***Çу кунĕсем çитрĕç те кĕçех темиçе çул ĕмĕтленнĕ шухăша пурнăça кĕртессипе ĕçлеме пуçлăпăр. Пурăнмалли пӳрт тумалла. Çавна май пĕр ыйту сиксе тухрĕ: пĕр кубла метра миçе хăма кĕрет-ши?***

**А. САМОЙЛОВ.**
Турай ял тăрăхĕ.

**Вулавçă ыйтăвĕпе А. Иванов строителе паллаштартăмăр. Специалист хуравĕ тĕплĕ те ансат пулчĕ:**

– Килти хушма хуçалăхра строительство ĕçĕсене кӳлĕнекенсем тата пурнăçлакансем хушшинче пĕр кубла метра миçе хăма кĕни тăтăш туха тăракан ыйту. Ялта пӳрт-çурт тумасăр майĕ çук. Кил хуçисене çĕнĕ условисенче пурăнма та, выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕке ĕрчетме те, пахча çимĕçпе утă-улăм упрама та çуртйĕр кирлĕ. Çак ĕçсенче хăмапа ытти йывăç материалсем тĕп вырăн йышăнаççĕ. Улталанмалла ан пултăр тесе ыйту паракансене пĕр кубла метрта миçе хăма пулмаллин официаллă нормативĕпе паллаштаратăп.

Чи меллĕ материалсем – 6 метр тăршшĕ хăмасем. Вĕсен хулăнăшне кура хăмасем пĕр кубла метра çакăн чухлĕ кĕреççĕ:

25 мм хулăнăш X 100 мм сарлакăшшисем – 66 штук;
25X150 мм – 44 штук;
30X150 мм – 37 штук;
40X150 мм –28 штук;
50X150 мм – 22 штук;
65X150 мм – 17 штук;
50X200 мм – 17 штук.

Йывăç материалсем туяннă чух паян ял çыннисем час-часах пăрăссем (брус) те туянаççĕ. 6 метрлă пăрăссене пĕр кубла метр туяннă чух улталанас мар тесен çакна асра тытăр:
150X150 мм – 7 штук;
150X100 мм – 11 штук;
100X100 мм – 17 штук;
50X100 мм – 33 штук.

Шпунтланă 6 метр тăршшĕ хăмасем пĕр кубла метра çакăн чухлĕ кĕреççĕ:
38X112 мм – 39 штук;
38X145 мм – 30 штук;
45X112 мм – 33 штук.

Вагонка хăма туяннă чух ял çыннисене тимлĕхе уйрăмах çивĕч тытма сĕнетĕп:
17X95 мм – 103 штук;
18X95 мм – 97 штук;
19X115 мм – 76 штук;
19X145 мм – 60 штук.



## Качака сĕтĕнчен

***Манăн сирĕн пата пĕр ыйту пур. Хам анчахрах качака усрама тытăннăран унăн сĕтĕнчен паха тăпăрчă, турăх, ытти сĕт продукчĕсем хатĕрлес вăрттăнлăхсене пĕлес килет. Мĕнле сĕнӳсем парайратăр-ши? Манăн çак çимĕçсем ӳÿçекрех тутăллă пулаççĕ пек туйăнать.***

**З. ГРИГОРЬЕВА.**
Муркаш сали.

Качака сĕчĕ усăллă иккенне паян нумай калаççĕ, тĕслĕхсемпе çирĕплетеççĕ. Çавăнпа та эсир качака усрас ĕçе кӳлĕннине ырлатпăр кăна.

Паян ялта пурăнакансем сурăхсемпе качакасем усрасси çине тимлĕх ытларах уйăрма пуçлани сисĕнет. Çакă – килти хушма хуçалăхсене тытса пыракансем тăтăшах шыравра пулнин тĕслĕхĕ. Танлаштарма: районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче сурăхсем тытасси «историе кĕрсе юлчĕ» пулсан, çĕнĕ условисенче хресчен (фермер) хуçалăхĕ йĕркелекенсем тата килти хушма хуçалăхсем «манăçа тухакан» выльăхсем те тупăш парасси пирки иккĕленменнине кăтартса параççĕ.

Килти хушма хуçалăхра качака усракансем унăн сĕчĕ çине тимлĕх уйăрнине палăртмалла. Качака сĕчĕпе «ăс кĕресси пирки» вĕсем пĕртте иккĕленмеççĕ. Иккĕленмеççĕ те тĕрĕс тăваççĕ. Вулавçă хускатнă ыйту çине хуравласа паян качака сĕтĕнчен продукци хатĕрлесси пирки калаçу пуçарар.

### Çу тăвасси

Качака сĕтĕнчен паха çу тăвас тесен, ан манăр, ăна сунă хыççăнах вĕретмелле. Кайран сĕте ăшăх та эмальлĕ савăтсене ярса тухмалла, сивĕ çĕре лартмалла. Икĕ кун иртсен тутлă хăймана пуçтарса илмелле те уçламалла. Продукт таса та çутă-шурă тĕслĕ пулать. Тĕсе улăштарас тесен уçланă чух унта шафран (пан улми сорчĕ) е кăшт кăна кишĕр сокĕ хушмалла.

Тутлă хăйма пуçтарса илнĕ хыççăнхи çамрăк турăх тути те сире килĕшессе шанатпăр.

### Кефир тата йогурт

Качака сĕтĕнчен ытлашши вăй хумасăрах килти хушма хуçалăхра йӳçĕтнĕ сĕт продукчĕсем хатĕрлеме май пур. Çакна валли сĕте вĕретмелле, пӳлĕм температури чухлĕ сивĕтмелле те кĕвелĕк (закваска) хушмалла. Кĕвелĕк вырăнĕнче кефир пулсан, иккĕмĕш кунне кефирлă пулатăр. Çур литр вĕретсе сивĕтнĕ качака сĕчĕ çине 2 апат кашăкĕ йогурт хушсан 2 талăкран килтех паха йогурт пулать. Тутине улăштарма е лайăхлатма йогурта 1:8 виçепе кирек епле сироп, джем е çырла хушсан та аван.

**А. ПĔТРОВ хатĕрленĕ.**

## Хуçалăхри арманçăсем





***Ĕçрен хăрамасан кирек ăçта та ырă ят çĕнсе илме пулать. Çакнашкал кăмăл-туйăмпа кĕтсе илчĕç мана «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн Çĕньял Шурчари арманĕнче Сергей Витальевич Бардасов арманçăпа (сăн ӳкерчĕкре сулахайра) кунта авăртнă çăнăха сывăхри ĕне тата сысна фермисене лашапа пĕчченех турттарса тăракан Андрей Александрович Леонтьев.***

***Ялти арман пĕрлешӳллĕ хуçалăхшăн çеç мар, ял çыннисем те ĕмĕртенпех килти хушма хуçалăха аталантарма çул уçакан сăл куç пулнă. «Арманçă ĕçĕ – çăкăрăн сĕтел çине пырас çул пуçламăшĕ», – терĕ Сергей.***

***Çакăн пек вуншар ĕçчен çинче тытăнса тăрать те ĕнтĕ районти вылăхчĕрлĕх отраслĕ, килти хушма хуçалăх.***

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Çул-йĕр

# Асăрханусăрлăха пула е...

Майăн 11-мĕшĕнче Карманкасси ялĕ çывăхĕнчи çул çинче «Хонда» çăмăл автомашина çул айккинелле кайса юпана çапăннă. 1989 çулта çуралнă водитель хăрушсăрлăх ременĕпе çыхăнман пулнă. Çапла вара сусранланнăскерне Муркаш больницине илсе çитерме тивнĕ. Халĕ ку тĕлĕшпе тĕпчев ĕçĕсем пыраççĕ.

**С. ИВАНОВ,**
**патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

## Прокуратурăра

# Кӳнĕ тăкака саплаштарнă

Район сучĕн приговорĕпе Ярославка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пулнă Г. Пайгусов РФ УК 286 статйин 2 пайĕнче (должнoçри полномочисене пăхăнманни), 159 статйин 3 пайĕнче (ултав туни) пăхнă йĕркесене пăснине палăртнă. Çапла вара экс пуçлăх район бюджетне 65 144 тенкĕ тăкак кӳнĕ. Тăкака каялла тавăрса пама ыйтса район прокуратури суда иск заявленийĕ тăратнă. Çапла вара Г. Пайгусов бюджета укçа каялла тавăрса панă.

**А. ЧЕРНОВ,**
**район прокурорĕн пулăшуçи.**


**МЕБЕЛЬ НА ЗАКАЗ**

- Кухни
- Прихожие
- Шкафы-купе
- Гардеробные
- Офисная мебель
- Стенки и многое другое...

АКЦИЯ!!!
Закажи мебель и получи денежный сертификат на покупку бытовой техники.

Адрес: с. Моргауши, ул. Гагарина, д.2
Здание бани- 2 этаж
**Тел: 8-927-665-96-46 Сергей (замер)**
**Вызов дизайнера бесплатный**

МЦФ
Межрегиональный центр финансирования
www.mcf21.ru
69-3-75, 8-967-473-61-21
ООО “Межрегиональный Центр Финансирования”
**БЫСТРЫЕ ЗАЙМЫ на любые цели**
- низкие % ставки (от 3% до 5%) в месяц от остатка суммы займа
- ДЛЯ ПОКУПКИ И СТРОИТЕЛЬСТВА ЖИЛЬЯ ПОД МАТЕРИНСКИЙ КАПИТАЛ

ЛЬГОТНЫЕ ЗАЙМЫ
НА РАЗВИТИЕ ЛИЧНОГО ПОДСОБНОГО ХОЗЯЙСТВА
Акция действует до 31.05.2012 г.
Моргаушский район, с. Большой Сундырь, ул. Советская, 16

для пайщиков
СОДРУЖЕСТВО
КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ
**МАТЕРИНСКИЙ КАПИТАЛ**
*для покупки и строительства жилья*
*% СТАВКИ ПО ЗАЙМАМ СНИЖЕНЫ*
**ЗАЙМЫ**
*на повседневные цели*
**СБЕРЕЖЕНИЯ**
*АКЦИЯ "МАЙСКИЕ ПРАЗДНИКИ"*
*% СТАВКИ УВЕЛИЧЕНЫ*
*действует с 2 по 31 мая 2012 года*
**62-6-86**
**8 900 333 0001**
с.Моргауши, ул.50 лет Октября, д.23, 2 этаж
www.kpksodrugestvo.ru

**Организация реализует средства защиты растений, препараты дотируются, скидки. Телефон в Чебоксарах: (8352)230-500, 8-900-333-5102.** 5-5.

**КАНЦТОВАРЫ на рынке с. Моргауши**
**Товары для школы и офиса**
**Бланочная продукция, книги и журналы**
**Ксерокопия, ламинирование, тиражирование**
**CD, DVD диски: игры, мультики, музыка, фильмы, софт**
**Оптовые цены в розницу**
**Доставка до офиса бесплатная**
**Заказы принимаются по телефонам: 8(8352)38-00-22, 62-0-22 (местный)**
**Хиты продаж: ручка – 2 руб., тетрадь 12 л – 2,50 руб., бумага «Снегурочка» – 150 руб.**

В Москву и Московскую обл. требуются
**ФАСОВЩИЦЫ, ГРУЗЧИКИ**
Питание, проживание — БЕСПЛАТНО.
Вахта. Выезд группами до предприятия.
Гарантии.
З/п 25 000-35 000 руб.
**Тел.:8(8352)29-80-30, 29-50-30.** 2-3.

**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ**
**2500 руб.** 9-10.
**РАССРОЧКА.**
**ТРИКОЛОР. ТЕЛЕКАРТА.**
**Тел.: 8-905-345-77-19.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 5-10.

**пластиковые ОКНА**
*Немецкое качество*
Окна STAR
**6-камерный профиль ПО ЦЕНЕ 3-камерного**
подробности по телефонам:
скидки до 35%
8-9603101816
Пенсионерам доп. скидки
Офис продаж в здании рынка с.Моргауши
*Окна стали дешевле...*











## Прогноз погоды

| | суббота 26 мая | | | | воскресенье 27 мая | | | | понедельник 28 мая | | | | вторник 29 мая | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +7 | +10 | +9 | +10 | +8 | +13 | +15 | +15 | +12 | +14 | +17 | +14 | +10 | +16 | +17 | +14 |
| Давление мм | 749 | 747 | 745 | 742 | 741 | 742 | 742 | 741 | 740 | 741 | 741 | 741 | 740 | 741 | 741 | 741 |
| Влажность % | 51 | 74 | 90 | 73 | 83 | 89 | 74 | 70 | 83 | 93 | 58 | 54 | 75 | 74 | 56 | 53 |
| Ветер м/сек | 4 | 4 | 4 | 3 | 3 | 3 | 3 | 2 | 4 | 5 | 5 | 4 | 5 | 5 | 6 | 4 |
| | С-В | С-В | С-В | С-В | С | С-В | С-В | С-З | З | З | З | Ю-З | З | З | З | З |
| Солнце восход / заход | | 04:20 | 21:19 | | | 04:19 | 21:20 | | | 04:18 | 21:22 | | | 04:17 | 21:23 | |
| Луна восход / заход | | 09:24 | 00:21 | | | 10:39 | 00:43 | | | 11:56 | 01:02 | | | 13:16 | 01:19 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | | | | | |

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Постановление администрации Ильинского сельского поселения № 29 от 23 мая 2012 года**

**О проведении публичных слушаний по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

В соответствии со ст.28 Закона Российской Федерации от 06.10.2003 года №131-ФЗ « Об общих принципах местного самоуправления в Российской Федерации», ст.14 Устава Ильинского сельского поселения Моргаушского района ЧР постановляю:

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» 29 июня 2012 в 10 часов 00 минут в здании администрации Ильинского сельского поселения по адресу: ЧР, Моргаушский район, д.Тренькино, ул. Новая, д.5.

2. Настоящее постановление подлежит официальному опубликованию в районной газете «Знамя победы».

**Глава Ильинского сельского поселения**
**Ю.В. ПЕРЦЕВ.**

**Проект муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

Руководствуясь п.10 ст.3 Федерального закона от 25 октября 2001 года №137-ФЗ «О введении в действие Земельного Кодекса Российской Федерации», с учетом результатов публичных слушаний постановляю:

Изменить разрешенное использование земельного участка из категории «земли населенных пунктов»:

- с кадастровым номером 21:17:030101:47 площадью 1000 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, выселок Васильевка,ул. Главная, д.19 с «для выращивания овощей и картофеля» на «для ведения личного подсобного хозяйства».

С предложениями по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 29 июня 2012 года до 9-00 часов.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:190501:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемых земельных участков.

Заказчиком проекта межевания является: Козлов Рудольф Петрович, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Демкино, ул. Суворова, д. 37.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:190501:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК им. Суворова, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:190301.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:031001:210, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования является размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Андреева Людмила Анатольевна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Чураккасы, ул. Советская, д. 81.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:031001:210. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, территория землепользования СХПК «Волга», земельный участок образуется из двух контуров: 21:17:031001:210:ЗУ1(1), расположенный в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:030701 и 21:17:031001:210:ЗУ1(2), расположенный в центральной части кадастрового квартала 21:17:031001.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.


**30 мая с 15 до 16 час. в Р Д К с. Моргауши**
**Слуховые аппараты -**
От 5500 до 12000 руб. Для небольшой потери слуха - 3500 р.
Гарантия 1 год. Выезд на дом по заявке, тел.: **89225036315**
**Скидка пенсионерам 500 руб. При сдаче старого слухового аппарата скидка 1000 рублей!**
**Полезные товары для дома, быта и здоровья:** дыхательный тренажер «Самоздрав». Гриб «Копринус» - от тяги к алкоголю. Массажеры, тапочки массажные. Ультразвуковая стиральная машинка. Прибор « Живая-мертвая вода». Отпугиватели грызунов, кротов, насекомых и собак. Электросушилка-коврик.
**Имеются противопоказания, консультация специалиста**
**Предъявителю объявления дополнительная скидка 5%**

**СРОЧНО! В Москву и МО требуются: фасовщицы, грузчики. ВАХТА – 20/30/45. Жилье, питание, транспорт – бесплатно. з/п 27 000. Трудоустройство – БЕСПЛАТНОЕ. Тел.: 8 (8352)36-42-92, 36-42-94.** 2-5.

Торговый Комплекс "ТЕРМИНАЛ"
**КИРПИЧ**
**ГАЗОБЕТОН / ГАЗОСИЛИКАТ**
**более 500 видов**
Тел: (8352) 30-55-10, 73-84-12 www.terminaltk.ru
ЧР, г. Чебоксары, Канашское шоссе, 7/1
ВСЕГДА НИЗКИЕ ЦЕНЫ


**Магазин «Сельхоззапчасти» реализует запасные части к тракторам и сельхозагрегатам. Адрес: д. Юнгапоси. Тел.: 8-937-372-02-15, 8-927-859-69-93.** 15-16.

* * *

**Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб».**
**Тел.: 8-905-340-07-78.** 8-10.

* * *

**Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбесто-цементные, профильные; арматура, цемент, сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитка, забор, беседка, теплица, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т. п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-4675, 8-927-880-0483.** 6-10.

* * *

**Продаю песок, гравмассу, бой кирпича, керамзитоблоки, с доставкой. Тел.: 67-66-95, 8-905-347-99-15.** 5-5.

* * *

**ГРАВМАССА, ЩЕБЕНЬ (доломитовый, гранитный, известковый), КЕРАМЗИТ, ПЕСОК (речной, карьерный), БЕТОН с доставкой до 30 т. за 1 рейс.**
**Тел.: 8-927-668-70-15, 38-70-15.** 4-18.

* * *

**Ĕне, пĕчĕк пăру, сурăх туянатăп.**
**Тел.: 8-905-343-60-63.** 9-10.

* * *

**Продаю жилой дом с земельным участком.**
**Тел.: 8-902-240-87-58.** 2-2.

* * *

**ЗАО «МСО «Моргаушская» требуются разнорабочие, бригада каменщиков. Обращаться по тел.: 69-7-23, 69-8-59.** 2-2.

* * *

**Продаю дрова (тополь), рубленые и колотые в ноябре 2010 г. Цена за 1 куб – 700 руб. Вурманкасы (Оринино). Тел.: 8-927-862-89-31.** 2-2.

* * *

**Моргаушское райпо организует продажу строительных материалов через магазин «Стройхозтовары» в кредит. Обращаться по тел.: 62-0-36, адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 23.** 5-5.

* * *

**Продается дом. Имеются хозпостройки: баня, котельная, погреб, сарай, газ проведен, водопровод, земельный участок 40 соток. Тел.: 8-909-300-57-01.**

* * *

**Хурапа шурă тĕслĕ 4 уйăхри тынашки çухалнă, тупса паракана тав тăвăпăр. Тел.: 8-909-303-26-25.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондицию, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97.** 3-8.

* * *

**Продаем тракторы Т-25, МТЗ-82.1, плуги, опрыскиватели, косилки, грабли-ворошилки, пресс-подборщики. Все новое. Тел.: 8(8352)40-67-65, 8-927-851-68-58.** 3-8.

* * *

**МОРГАУШСКОМУ РАЙПО СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ: парикмахеры, врачи-косметологи, специалисты по маникюру и педикюру, специалисты по депиляции и эпиляции, визажисты, массажисты.**
**Обращаться по тел.: 62-9-40 или 8-937-379-18-08.**

* * *

**Утерянный аттестат о среднем (полном) общем образовании, выданный на имя Никитиной Елены Николаевны под номером Б № 0764633, считать недействительным.**

* * *

**Требуются монолитчики, каменщики, монтажники, сварщики, плотники. Москва. Вахта, полный соцпакет. Тел.: 8-906-134-87-86.** 1-5.

Нумай çул МСО «Моргаушская» ЗАО-ра, «Новая Юнга» хуçалăхра водитель пулса ĕçленĕ Кăпас ялĕнчи хисеплĕ çын

**Вениамин Федорович**
**ТЕРЕНТЬЕВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе юлташĕсем тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учреждениĕ.

**Тĕп редакторшăн В.Л. ШАПОШНИКОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 25.05.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4635.